Спорт

# Ентешсене халалласа



Вуннăмĕш çул ĕнтĕ Чуманкассинчи вăтам шкулта Чечен вăрçинче пуçĕсене хунă Л. Семеновпа А. Димитриева асăнса ăмăрту иртет. Икĕ çамрăк каччă, вăхăтсăр çĕре кĕнĕскерсем, çак шкулта вун пĕр класс пĕтернĕ. Çавăнпа та кунти ачасемпе учительсем вĕсене асăннине хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов та, пурте пĕлекен спортсменка Вера Соколова та çак ырă йăлана малалла тăсса пымалли пирки каларĕç. Старта тухакансене ăнăçусем сунчĕç.

Кăçал ăмăртăва пирĕн районти сакăр шкул хутшăнчĕ: Чуманкасси, Турай, Тойкилтĕ, Çатракасси, Муркаш, Орининти вăтам, Сосновкăри тулли мар вăтам шкулсен тата Муркашри лицей командисем.

Малтанах йăлана кĕнĕ тăрăх старта 5-7-мĕш классенче вĕренекен хĕр ачасем тухрĕç. Çур километрлă дистанцире хăвăрт утассипе Е. Емельянована (Тойкилтĕ) çитекенни пулмарĕ. Ăмăртура пĕлтернĕ тăрăх, паянхи куна вăл республикăра та чи малта иккен. Вăл А.В. Васильев тренер патĕнче хăйĕн ăсталăхне туптать. Иккĕмĕш вырăна Муркаш шкулĕнчи И. Портнова, виççĕмĕшне Орининти И. Волкова тухрĕç.

Финиша тухсан хĕр ачасем сивĕрех те çиллĕ çанталăк кăшт чăрмантарни пирки каларĕç. Отарккăпа Чуманкасси ялĕсене çыхăнтаракан çул çинче, чăнах та, çил хуçаланатчĕ. Апла пулин те çамрăк спортсменсем пĕрин хыççăн тепри старта тухрĕç.

Çак ӳсĕмри арçын ачасем хушшинче малти вырăнсене пурне те Тойкилтĕ вĕренекенĕсем çĕнсе илчĕç: Г. Иванов (1-мĕш вырăн), Р. Юсупов (2-мĕш), Д. Милютинпа Р. Владимиров (3-мĕш). 8-9-мĕш классенче вĕренекен йĕкĕтсем хушшинче те Тойкилтĕри Р. Емельянов финиша пĕрремĕш утса çитрĕ. Хыççăнхи вырăнсене К. Ильинпа (Чуманкасси) А. Кириллов (Оринин) çĕнсе илчĕç. Çак ушкăнри хĕрсем те 1 километрлă дистанцие хăвăрт парăнтарчĕç. Чуманкасси шкулĕнчи М. Смирнова (1-мĕш вырăн) ывăннине те туймарĕ пулас, питĕ çăмăллăн утрĕ вăл. Ăна çак шкулти О. Иванова хăваларĕ, анчах унăн иккĕмĕш вырăнпа çырлахма тиврĕ. Виççĕмĕш вырăна Тойкилтĕри К. Порфирьева çĕнсе илме пултарчĕ.

Чупас енĕпе ăмăртакансем вара старта йышлăрах тухрĕç. Вĕсен хушшинче тупăшу та вăйлăрах пулчĕ. Кĕçĕн ушкăнри арçын ачасем хушшинче малтисем çаксем пулчĕç: В. Васильев (Тойкилтĕ) - 1-мĕш вырăн, А. Петров (Сосновка) - 2-мĕш вырăн, А. Лебедев (Çатракасси) - 3-мĕш вырăн. Хĕр ачасем малти вырăнсене çапларах пайларĕç: В. Васильева (Сосновка) - 1-мĕш, О. Ремнева ( Оринин) - 2-мĕш, И. Осипова (Турай) 3-мĕш вырăна тухрĕç.

Вăтам ӳсĕмрисем те сахаллăн тухмарĕç старта. Старт умĕн вĕсем шăнас мар тесе самаях чупкалатчĕç, сиккелетчĕç. Çавăнпа та стартра малалла питĕ хăвăрттăн ыткăнчĕç, анчах пĕр километр хушшинче темĕн те пулса иртрĕ: малта чупакансем ылмашăнсах пычĕç. Пĕрремĕш вырăна Оринин шкулĕнчи Е. Наумова тухма пултарчĕ. Вăл хăйĕн вăйне тĕрлĕ вырăнсенче тĕрĕс уса курса чупнине кăтартрĕ, çавăнпах çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕ ĕнтĕ. Ун хыççăн финиша В. Тодинова (Муркаш) тата О.Андреева (Сосновка) çитрĕç. Яшсем те çак дистанцие хăвăрт чупса тухрĕç. Старт хыççăнах малти вырăна Турай шкулĕнчи Э. Албутов тухрĕ, вĕçне çитиччене вăл хăйĕнчен никама та иртермерĕ. Тойкилтĕсем кунта та палăрчĕç: А. Ораинпа Р. Емельянов финиша иккĕмĕш тата виççĕмĕш чупса çитрĕç.

Аслисем ăмăртнине те сăнама интереслĕ пулчĕ. Хĕрсем, ытла нумаййăн пулмарĕç пулин те, дистанцие лайăх кăтартусемпе вĕçлерĕç. И. Никитина (лицей) пĕрремĕш, И. Васильева (Муркаш шкулĕ) иккĕмĕш, О. Скворцова виççĕмĕш çитрĕç. Каччăсенчен финиша пĕрремĕш Муркаш шкулĕнчи Д. Плечов, иккĕмĕш - Çатракассинчи А. Скворцов, виççĕмĕш çак шкулти А. Никитин чупса тухрĕç.

Ăмăртура мала тухакансене пурне та Чуманкасси шкул администрацийĕ тата кунти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева асăнмалăх парнесемпе грамотăсем парса саламларĕç. Çак ăмăртăва малаллахи çулсенче те йышлăн хутшăнма сĕнчĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ăмăртма яланах хатĕр.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ĕçлекен çамрăксен спартакиади

# Ĕçре те, ăмăртура та маттур

Иккĕмĕш çул ĕнтĕ предприятисемпе организацисенче тата учрежденисенче ĕçлекен çамрăк специалистсем валли спартакиада иртттереççĕ. Унта спортăн 8 тĕсне кĕртнĕ. Кăçалхи ăмăртусене районти Спорт çуртне çамрăксен 6 команди килсе çитнĕ. Кусем вĕсем иртнĕ çулхи ăмăртусен çĕнтерӳçи пулса тăнă «Çамрăк педагогсем», район администрацийĕн, Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен, районти тĕп больницăн тата хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн командисем.

Ăмăртусем пуçланас умĕн унта хутшăнакансене район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов саламланă, ăнăçлă стартсем, спортра тата ĕçре ăнăçусем суннă.

Ăмăртăва хутшăнакансем «Хаваслă стартсем» эстафетăра, шашкăлла тата шахматла выляссипе, армспорт, сĕтел çи теннисĕ, дартс енĕпе, волейболла выляссипе, канат туртассипе вăй виçнĕ.

Спартакиадăн пĕтĕмĕшле итогĕсем тăрăх кубок «Çамрăк педагогсем» командăрах юлнă. 28 балл пухса тата çĕнтерӳçĕ-командăна 3 балл выляса ярса, иккĕмĕш вырăна район администрацийĕн команди йышăнма пултарнă. Виççĕмĕш вырăнта – районти тĕп больницăн команди.

Спортăн пур енĕсемпе те мала тухнисене медальсем, призлă вырăн йышăннă командăсене волейбол мечĕкĕсем парса чыс тунă.

Шкул пурнăçĕ

# Кайăксене юрататпăр, пур çĕрте те пултаратпăр

2008-мĕш çул Ырă ĕçсен çулталăкĕ пулнине пурте пĕлетпĕр, анчах Раççейри кайăк-кĕшĕке сыхлакан союз çак çула Уйăп çулĕ тесе йышăннине нумайăшĕ пĕлсех каймасть пулĕ. Эпир вара, Оринин шкулĕнче вĕренекенсем, кун пирки хĕллех пĕлтĕмĕр. Çавăнпа та паянхи кунччененех кайăксене сыхлас, пулăшас ĕçе туса пыратпăр.

Сивĕ хĕл кунĕсенче çунатлă туссене сырăшсемпе тата унта хурса паракан апатпа савăнтартăмăр. Çав хушăрах сăнавсем те иртерме пултартăмăр. Паллах, кайăксен тусĕсем пулнă май эпир вĕсен кунне те чаплă КВН вăййипе иртертĕмĕр. Шкул ачисем шăнкăрчсене те юратсах кĕтсе илчĕç: йывăççем çине сахал мар вĕлле хатĕрлесе çакрĕç.

Ака уйăхĕнче иртнĕ Уйăп çулне халалланă республикăри орнитологи конкурсне та хутшăнма вăй çитертĕмĕр. 6-мĕш класра вĕренекенсен «Орлята» команди унта 2-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, диплома тивĕçрĕ. Вĕсене хатĕрлекен биологи учительне А.М.Григорьева та диплом парса чысларĕç.

**В.НИКИТИНА,**
**Оринин шкулĕнчи 8-мĕш класра вĕренекен.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Ака уйăхĕ ăмăртусемпе пуян

Чăннипех те пуян пулчĕ çак уйăх Москакасси шкулĕнче вĕренекенсемшĕн. Вăл пирĕншĕн ăнăçлă иртнине палăртнă пулăттăм. Акă ака уйăхĕн 1–6-мĕшĕсенче республика шайĕнче И.Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнине халалласа «Интернет-олимпиада» конкурс иртрĕ. Пирĕн шкултан вăл конкурса 10-мĕш класра вĕренекен Александр Иванов хутшăнчĕ, 1-мĕш вырăна тухма пултарчĕ. Ăна вара чăваш чĕлхипе вĕрентекенĕ Маргарита Гурьевна Матросова ертсе пынă. Музыка учителĕ – Анатолий Валерьянович Макаров.

* * *

Шкулти ачасем «Ростки возрождения» конкурса та япăх мар хутшăнчĕç. Республикăри ăмăртăва хутшăнса та ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче Шупашкарта чи пултаруллисем пултăмăр, Муркаш районне пĕрремĕш вырăна кăлартăмăр. Кунта вара истори учителĕ Олег Иосифович Тарасов та сахал мар тăрăшрĕ.

**Анна ЦАРЕВА,**
**Москакасси шкулĕ.**

2008 çул – Çемье çулталăкĕ

# Пĕрле ӳсĕм çуралать



Кăçалхи çулталăка Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Çемье çулталăкĕ тесе палăртнă. Çавна халалласах пулĕ ĕнтĕ районта «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье» конкурс иртерчĕç. Шкулта иртернĕ ăмăртура пирĕн çемье команди пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарнăччĕ. Районти ăмăртура та хамăра япăх енчен кăтартмарăмăр, пĕтĕмĕшле иккĕмĕш вырăна тухрăмăр, медале тата парнесене тивĕçрĕмĕр.

**Карина АНДРИАНОВА,**
**Шурча шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Андриановсен çемье команди ăмăрту хыççăн.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:020202:93, местоположение: участок находится примерно в 200 м по направлению на юг от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, с. Ильинка, ул. Заводская, дом 7 площадью 58603 кв.м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Конкурсный управляющий СХПК «Нива» проводит продажу по договорным ценам имущества СХПК «Нива» (Чувашская Республика, Моргаушский р-н, с. Большое Карачкино, ИНН 2112000482):**

**Комплекс МТФ д. Ойкасы, в т.ч.: коровник нижний, 1978; коровник верхний, 1987; свеклохранилище, 1989; телятник, 1988; мельница МТФ, 1976; сенажная траншея, 1983; водобашни 1976 (2 шт.); автовесы 10 т. 1989; емкости.**

**Административное здание, 1979; пожарное депо, 1970; силосная траншея; сенохранилище. Оборудование: молот кузнечный МВ-41127, 1985 г.; пресс гидравл. ОКС, 1970; станок верт.-сверл. 1977; кран-балка. Кроме того, эл. двигатели, магнитные очистители воды, емкости 25 м3 (3 шт.), ККМ «Орион», 100 К, здания (кирпичные, деревянные) на снос, плиты перекрытия и др. реализуются по прямым договорам купли-продажи.**

**Заявки направлять конкурсному управляющему СХПК «Нива» Тарасову С.В. по адресу: 428024, а/я № 1, г. Чебоксары, пр. Мира, 13, тел. для справок: 8-927-845-87-92.**

**Организации срочно требуются: водители с опытом работы не менее 3-х лет для работы на автомобилях КамАЗ-55102, суперМАЗ-полуприцеп, МАЗ самосвал, УРАЛ. Оплата – оклад и сдельно-премиальная; трактористы-машинисты с опытом работы не менее 3-х лет на трактора Т-150, погрузчик-экскаватор ПЭА-1.0. Оплата сдельно-премиальная; газоэлектросварщик. Оплата от 10000 рублей и премиальные.**

**Обращаться по тел.: 8(8352)54-65-00, 8-927-847-71-18.**

**Совет директоров ОАО «Моргаушскавтотехсервис» сообщает о проведении общего собрания акционеров23 мая 2008 года. Начало собрания в 14.00 часов. Начало регистрации в 13.00 часов. Место проведения - клуб ОАО «Моргаушскавтотехсервис».**

**Повестка дня:**

**1. Выборы счетной комиссии.**

**2. Отчет о результатах финансово-хозяйственной деятельности и утверждение годового баланса, счета прибылей и убытков за 2007 год.**

**3. Утверждение акта проверки ревизионной комиссии и аудитора.**

**4. Утверждение решения Совета директоров о дивидендах за 2007 год.**

**5. Выборы членов Совета директоров.**

**6. Выборы членов ревизионной комиссии.**

**7. Утверждение аудитора общества.**

**8. Ознакомление решениями заседания Совета директоров.**

**СОВЕТ ДИРЕКТОРОВ ОАО «МОРГАУШСКАВТОТЕХСЕРВИС».**

**Спутниковые антенны *ТРИКОЛОР* с установкой, регистрацией и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19.** 4-6.

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41.** 17-20.

**Продается: аппарат отопительный, газовый, бытовой, с водяным контуром. АОГВ-29-1. Ростов. Модель 2216-08.**

**Аппарат водонагревательный, проточный, газовый, бытовой. Астра ВПГ-23 $1_2$- В11-УХПЧГ. Модель 8910-12.**

**Адрес: Моргаушский р-н, д. Сендимир, А.Н. Зайцев.**

**Тел.: 8-927-669-15-24.** 2-2.




**Продаю ВАЗ 21093 2001 г.в., серебристый, двигатель инжекторный, сигнализация, магнитола, тонировка, в хорошем состоянии. Цена 112 тыс. руб.**

**Тел.: 8-905-341-84-27.**

**Куплю деревянный дом на вывоз, б/у.**

**Тел.: 8-906-307-61-75.**

**ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные 6-метровые 50х120, 50х150, 50х200; брусья 100х100, 100х150, 150х150, цемент, шифер, рубероид 15 м. Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58.** 1-6.


Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ кунта ĕçлекен Любовь Витальевна Ильинан ашшĕ

**Виталий Федотович**
**ИЛЬИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта экономистсен пай пуçлăхĕ пулса ĕçлекен В.А. Капитонован тăван

**ПИЧЧĔШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Хаçатăн çитес номерĕ майăн 5-мĕшĕнче тухать.**


Моргаушская районная газета
«Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 29.04.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3637.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.